Вăрнар муниципаллă округĕ
Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан Çĕрпел вăтам шкулĕ

# Чăваш халăх сăмахлăхĕ

## Тĕллевĕсем:

- Халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе паллаштарасси;
- - чăваш халăхĕн авалтан пынă йăли-йĕркисене, сăвă-юрăллă, вайă- ташăллă уявĕсене упраса хăварасси

## Задачисем :

- жанрăн тытăм тата шалаш уйрăмлăхĕсене палăртас хăнăхăвĕсене аталантарасси

- - харкамлăх наци пахалĕсемпе традицийĕсене хаклама вĕрентесси
- -ачасене ырă та тӳрĕ кăмăллă пулма, ваттисене хисеплеме, тăван халăхпа ҫĕршыва юратма вĕрентесси.

-чăваш ташши – юррине, тăван чĕлхе илемне туйма хăнăхтарасси.

# Сăпка юррисем

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!



Канлĕ каç килет иккен
Çăлтăрсем сутса.
Çывăр, пĕчĕк чиперккем,
Çывăр лăпланса.
Çывăраççĕ çырмасем,
Ыйхăра — вăрман.
Тĕлĕреççĕ тирĕксем…
Çывăр, чунăм ман.

1948

# ЙĂПАТМАЛЛИ СĂВĂСЕМ. ШУТЛАВ СĂВВИСЕМ

Пысăк пул, пысăк пул,
Уссен маттур ача пул,
Юрлама та ăста пул,
Ташлама та маттур пул :

Асанне мунча хутать
Çăраççине çухатать
Кам тупать, кам тупать
Çав тухать!



# ВĂЙĂСЕМ

**«Тутăр пăрахмалла»**

Эп утатăп хурланса,
Хама юлташ шыраса
Утсан-утсан чупатăп
Тутăр пăрахса хăваратăп.
Икĕ кайăк вĕçет,
Вĕçсен-вĕçсен лараççĕ.
Ларсан – ларсан тăраççĕ,
Çунат сулса уйрăлаççĕ.




**«Çерем пăсса вир акрăм»**

-Çерем **пăсса** вир акрăм, вир акрăм.(2хут)
Вирĕ пулчĕ пăрça пек, пăрça пек.
Эпир ăна, эпир ăна таптатпăр. (2 хут )
- Эсир мĕнпе таптатăр, таптатăр?
- Тур лашапа таптатпăр, таптатпăр.

# ЮМАХСЕМ

**Атăл урлă каçсан, ăс кĕрет**

Ĕлĕк-авал икĕ çулçӳрекенĕн лашапа Атăл урлă каçмалла пулнă. Тин ларнă пăр пĕр тĕлте яп-яка шăнна, унта лаши ури тытман, пырса кĕнĕ-кĕмен шуса ӳкнĕ.

— Мĕн тăвăпăр? — тенĕ пĕр çулçӳрекенĕ теприне.

— Нимех те мар, лашана чĕлпĕрпе çыхăпăр та сĕтĕрсе каçăпăр, — тенĕ лешĕ.

Каланă та ĕçне те тунă. Вĕсем пăр çине шаплатса ӳкнĕ лашана чĕлпĕрпе çыхса çыран хĕррине сĕтĕрсе тухнă. Анчах лаша тирĕ, пăр çинче шуса пырса, юн тухичченех шăйăрăлнă иккен.

— Эх! — тесе каларĕ, тет, вара хай çулçӳрекен, ĕнсине хыçса. — Куна пĕлнĕ пулсан, лашана хуп çине хурса каçармаллаччĕ пирĕн.

— Çаплаччĕ те. Малтан эпир Атăл урлă каçман-çке, — терĕ, тет, тепри.



# ПУЛМАСЛА ХАЛАПСЕМ




Эпир пĕрре асаттепе сунара кайрăмăр. Пĕр мулкач куртăмăр.

Хăвалама тытăнтăмăр. Хăваласа çитрĕмĕр те кӳсĕкпе иле-иле çапатпăр — вилмест. Эпĕ

хам хыт курăкпа кăна петĕм — мулкач вилчĕ кайрĕ.

Асаттепе иккĕн çĕклесе хума тăратпăр — хураймастпăр. Хам пĕчченех тытрăм та

Пар лаша кӳлнĕ хамăр. Пар лашана хăвалатпăр — туртаймаççĕ. Пĕрне тăварса, пĕрне

Киле таврăнтăмăр. Мулкача асаттепе йăтма тăратпăр — йăтаймастпăр. Пĕччен тытрăм

Алăкран кĕртме тăратăп — кĕмест. Тĕнĕрен тĕртрĕм те — кĕчĕ кайрĕ. Мулкача хуранта

- пĕçерме тăратпăр — кĕмест. Çăпалана хуратпăр — тулмасть.
- Аннене пĕçерме хушрăм. Анне пăхса тăман та, яшки хытă вĕренĕ, мулкач вĕренипе

- *Шăши салтака каять:*
- *Йĕке хӳре йĕкăртатса*
- *Хăнисене хăналать*

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮРРИ



**Çĕмĕрт çеçки çурăлать**

Çĕмĕрт çеçки çурăлать те,
çĕмĕрт çеçки çурăлать,
Вăрман витĕр курăнать,
вăрман витĕр курăнать.
Шурă кĕпе тăхăнсан та,
Шурă кĕпе тăхăнсан
вăйă витĕр курăнать,
вăйă витĕр курăнать.
3) Енчĕ пушмак, шур чăлха та
ёнчĕ пушмак, шур чăлха,
Кирĕк тивмĕ теетрим,
кирĕк тивмĕ теетрим.
4) Вылямастăр, кулмастăр та,
вылямастăр, кулмастăр,
Емĕр иртмĕ теетрим,
ĕмĕр иртмĕ теетрим.

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ТАШШИ




## Линкка-линкка

- Линкка-линкка авкаланма юман хăма кирлĕ
  Халь те юман, халь те юман, тата юман кирлĕ

  Йăкăш-якăш шуçкалама яка хăма кирлĕ
  Халь те яка, халь те яка, тата яка кирлĕ

  Тапăр-тапăр ташлама кĕмĕл пушмак кирлĕ
  Халь те кĕмĕл, халь те кĕмĕл, тата кĕмĕл кирлĕ

  Чуп-чуп чуп тума чипер хĕрĕ кирлĕ
  Халь те чипер, халь те чипер, тата чипер кирлĕ

# ВАТТИСЕН САМАХЕСЕМПЕ КАЛАРАШСЕМ

Вутăн алли те, ури те вăрăм.
Кĕрхи кун кĕлтеллĕ, çурхи кун çеçкеллĕ.
Пуриншĕн те пĕр хĕвел.
Çăла ан сур, шывне хăвах ĕçĕн.
Çурхи кун кĕр тăрантарать.
Вăрман пек пуянни çук, хир пек асли çук.
Йывăçне кура çимĕçĕ.
Пĕччен йывăç час тӳнет.
Ват çын — тăват çын.
Ват çынтан кулма хушман.
Çĕнĕ тусна туп, киввине ан ман.
Юлташу хăвăнтан лайăхрах пултăр.
Пăсма пĕр кун, тума виç кун.
Çиччĕ виç те пĕрре кас.
Суя чупать çĕр çулпа, чăнни утать пĕр çулпа.
Çын валли шăтăк ан алт, хăвах кĕрсе ӳкĕн.
Уй куçлă, вăрман хăлхаллă.
Ултавпа инçе каяймăн.
Вĕренни мулран хаклă теççĕ.
Вĕренни йăтса çӳрес çĕклем мар.
Чăн сăмахăн суйи çук.
Ырă тус укçаран хаклăрах.
Нумай итле, сахал калаç.
Çынна йывăр ан кала, ху та çавна курăн.
Ырă сăмах ылтăнтан хаклă.
Этем ырă ĕçĕпе.
Куç хăрать те алă тăвать.

# ШӲТСЕМ.ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ.



- Юхан шыв варринче мĕнле чул выртать?
- Пĕр шăшин ик хӳре.
- Вăрман варринче туй хуранĕ вĕрет.
- Чипер акайăн хырăмĕ çурăк.

Йĕкĕт, Мĕкĕт, Чĕпĕт пасара кайнă. Йĕкĕтпе Мĕкĕт киле таврăннă, пĕри ӳксе юлнă. Хăшĕ ӳксе юлнă?

# СӐНАВСЕМПЕ ПАЛЛӐСЕМ










- **Сӑнавсемпе паллӑсем** - ҫут ҫанталӑкри пулӑмсен улшӑнӑвӗсем урлӑ мӗнле ҫанталӑк пуласса, хуҫалӑх ӗҫӗсене епле тата хӑҫан тусан мӗнле пуласса сӑнаса пынин пӗтӗмлетӗвӗ.
- Лаша ӑшӑтас умӗн выртать, сивӗтес умӗн тӑрать.
- Хура кураксем вӗҫсе килнӗ хыҫҫӑн тепӗр уйӑхран юр ирӗлсе пӗтет.
- Мулкач сад пахчине кӗрет пулсан хаяр сивӗсем часах пӗтмеҫҫӗ.
- Чӑхсем ирех кашта ҫине хӑпарса ларсан — сивӗтессе, мӗн тери ҫӳлерех лараҫҫӗ —ҫав тери сивӗрех пулать.

# ЮРЛАМА ТА ТАШЛАМА ТА ПИТ ĂСТА ЭПИР



*Пĕчĕк çеç путене*
*Сарă тулла юратать,*
*Юратать, юратать*
*Чăнахах та юратать.*

*Пĕчĕк ача Петĕр пур*
*Сад пахчине юратать.*
*Юратать, юратать*
*Чăнахах та юратать.*

*Сад пахчине тухать те,*
*Улма-сырла пуçтарать,*
*Пуçтарать , пуçтарать*
*Чăнахах та пуçтарать.*

*Улма-çырла пуçтарать,*
*йыш пуçтарса хăналать.*
*Хăналать, хăналать*
*Чăнахах та хăналать.*

# Тавтапуç пире итленĕшĕн!

**Вĕрентекен:**

***Пирĕн вайă-кулă,ташă – юрă вĕçленчĕ.***

***Малашне паян юрланă юрăсене, ташăсене, вăйăсене манса ан кайăр, аса илсех тăрăр.***

***Ĕçре, вĕренӳре тăрăшса, хавхаланса вăй хурăр.***